„Канаш“ хаҫат ҫумӗнҫе тухат̆.

КАПКӐН

18-мӗш №

Октӑпӗршӗн, 1926 ç. 2-мӗш ҫул тухат̆.

КАМ МӖНПЕ КӖРЕШЕТ?

— Ҫутта кӑларакан ҫуттине йуратмас̆, ӑна кӗнекепе персе ӳкересшӗн, пионер ашшӗнне, ерех макниҫӗ туртса илесрен, кайалла туртат̆, хаҫатра ӗҫлекен перопа, милитсионер шашкӑпа кӗрешет, ыттисенҫен хӑшӗ-пӗри ерехпе кӗрешес тесе, ӑна ӗҫсе пӗтерессшӗн тӑрмашат̆.

Карҫӑк.

Сутйа тинкеререх пӑхрӗ сутпа айӑпланаканнисем çине. Вӗсем иккӗн—упӑшкипе арӑмӗ. Самаконштҫиксем.

— Мӗнлехе капла, ыйтаҫ сутйа, апла пулсан есӗ хӑна ху пӗртте айӑплӑ çын шутне хумастӑн?

— Çук, тет айӑпланаканни, хумастӑп... Арӑм айӑплӑ. Унтан ыйтӑр. Епӗ ним те пӗлместӗп.

Тӑхтаха, мӗнле капла? тесе тӗлӗнет сутйа.—Есӗ арӑмупа пӗр пӳртре пурӑнатӑн, мӗнле пӗлместӗн, мӗнле капла, арӑму мӗн ӗçлесе пурӑнни çинҫен те пӗлместӗн?

— Пӗлместӗп, сутйа йулташ.

— Тӗлӗнмелле, тет сутйе.—

— Айӑпланакан арӑм, ес мӗн калама пултаратӑн тата?

— Тӗрӗс ӗнтӗ, тӗрӗс, сутйа... Айӑпӗ манрах, никамра та мар. Манах персе вӗлерӗр.. Унга мар айӑпӗ, тет арӑм.

— Краштанккӑ, тет сутйа, есӗ упӑшку айӑпне сирсе йарастӑн пулмалла, анҫах пустуйах хӑтланатӑн. Сут пурӗпӗр кам айӑплине тупаҫ... Есӗ ӗçе ҫарса тӑратӑн çеç. Хӑвах шухӑшласа илха: упӑшку санпа пӗр пӳртрех пурӑннӑ çӗрте сан нимӗн те пӗлменнине никам та ӗненмӗ. Пӗрле пурӑнмастӑри мӗн есӗр апла?

Карҫӑк шарламасҫ. Упӑшки савӑннипе пуçне сулса çеç тӑраҫ.

Пурӑнмастӑп еп унпа, тет вӑл, çапла çав: пурӑнмастӑп. Хӑшӗ-хӑшӗ пурӑнаҫ тесе шутлаççӗ те, çапах та епӗ пурӑнмастӑп... Пуриншӗн те вӑлах айӑплӑ...

— Ҫӑн и вӑл, тесе ыйтаҫ арӑмран сутйа.

— Ҫӑн... Мана персе пӑрахӑр, вӑл айӑплӑ мар.

— Апла еппин?—тет сутйа.—Пурӑнмастӑр. Кӑмӑлсем килӗшмерӗçи мӗн?

Упӑшки пуçне сулса кӑтартрӗ.

— Кӑмӑл килӗшмерӗ, сутйа йулташ, тата мӗн... вӑл манран аслӑрах...

—Мӗнле аслӑ, тет арӑм.—Пӗр çулхисемех епӗр, сутйа йулташ. Пӗр уйӑх анҫах еп унтан аслӑрах.

— Çапла ӗнтӗ, çапла, тет упӑшки, пӗр уйӑх анҫах... Вӑл тӗрӗс каларӗ, сутйа йулташ.. Ну, паллах ӗнтӗ, хӗрарӑмшӑн пулсан пӗр уйӑх аслӑрах пулни те... пӗр уйӑхрах вӑл ватӑлса каяҫ. Хӗрӗх çулхискер вӑл...

— Хӗрӗхре мариç. Сунаҫ вӑл, сутйа! Тупата суйаҫ.

—Хӗрӗхех пулмасан та, вӑтӑр тӑхӑрти хӗрарӑма карҫӑк теме пуçлаççӗ ӗнтӗ. Ватах çав. Хӗрӗх патнелле çывхарнӑ ҫухне çӳçӗсем те кӑвакарма пуçлаççӗ, ытгисем те...

— Мӗн ыттисем?— -вӑрçма тапратрӗ хайки арӑм.—Пӗрре çӑварна уçнӑскерне каласаҫ пулаҫ. Мӗн мана пӗтӗм халӑх умӗнҫе намӑслантарса тӑратӑн. Кӑтартӑп сана...

Сутйа кулкаласа çеç лараҫ.

— Уншӑн нимӗн те мар, Маруçӑ, тет упӑшки.—Ахаҫ каларӑм. Ытахаҫтен анҫах каларӑм .. Паллах ӗнтӗ, хӗрӗх çулти арӑмӑн тирӗсем те пӗркеленеççӗ... Пурӑнас темен еп унпа, сутйа... Тупата!

— А-а, ес аплан!—кӑшкӑраҫ каллех арӑм. Тир килӗшмери? Ӳг тирсем пӗркеленме пуçлани сана к и л ӗ ш м е р и. Йатӑ пиҫӗ! Пӗтӗм халӑх умӗнҫе намӑслантараҫ мана. Суйаҫ вӑл. Манпах пурӑнаҫ, усал, йатӑ пиҫӗ. Манпах. Самакун аппаратне те хӑйех туйанҫӗ.. Епӗ пур ун пирки кувта хаяран карӑм, усала çӑлас тесе суйса тӑтӑм, вӑл пур... мана намӑслантараҫ... Айӑпӗ унтах...

Карҫӑк йӗрет, сӑмсисене шӑнкартса.. Упӑшки арӑмӗ çине вӑшт-вашт пӑха пӑха илет. Кайран ним тума пӗлмесӗр аллине сулса:

— Шуйтан карҫӑкӗ... карҫӑк карҫӑках çав .. Йурӗ ӗнтӗ, сутйа. Епӗ... Епӗ те айӑплӑ пулам. Нимӗн тумалли те çук. У-у, шуйтан карҫӑкӗ... Пӗтерҫӗ, тет. Сут саççетаттӗлсемпе совещҫани тума каяҫ.

СОШҪӖНКӐ.

Йал пӳтшеҫӗ.

Йалсоветне пыракан тӗрлӗрен инструктӑрсене хӑш ҫухне йал укҫипе тӑхса йараҫҫӗ. Капла хӑтланни йалсовет пӳтшетне наҫарлатса пырать.

— Пăхха: каллех хуларан инструктăр килнӗ... Каллех малтан шутласа хуман расхотсене ҫырмалли кӗнеке тăрăх расхотсем кăлармалла пулать.

Килӗрен ҫырса ҫӳренӗ ҫухне.

Кăҫал теккапӗр уйăхӗн 17-мӗш ҫислинҫе Ҫăваш республӗкӗнҫе переппӗҫ тапранмалла. Переппӗҫ ҫух хресҫенсен тӗрӗс ҫветенисем памалла.

(Канаш 231-мӗш №).

Ҫăваш пӳртне статисҫӗк пырса кӗрет:

— Миҫе теҫеттин ҫӗр акаттăр есӗр, тесе ыйтать вăл хуҫинҫен.

Киҫ хуҫи туртăнарах тăрать: „тӗрӗссипе каласан, ытлашши налок тӳлеттерӗ“.

— Епӗ нимӗн те акмастăп, терӗ вăл.

— Мӗнле нимӗн те акмастăн?—тесе тӗлӗнет статисҫӗк.—Тырă-пулă пухатăн, вӗт?

— Тырă-пулă та пухмастăп. Пӗр пӗрҫе те ҫук, тет хуҫи пӗре суйма пуҫланăскер.

— Апла пулсан пӗрпӗр ремис пӗлетӗн пуҫ.

— Ҫук, ҫук. Мӗн каласан. Мӗн ремис пӗлетпӗр епӗр.

— Ҫăпта та ҫапмастăни?

— Ҫук. Ҫăпта ҫапма пӗлместӗп.

— Мӗнпе тăранса пурăнатăн апла есӗ? Ни ҫӗр акмастăн, ни ремис пӗлместӗн... Апла пулсан услам туса пурăнатăн пуҫ?

— Турă ҫырлахах ун пек ӗҫпе хăтланасран. Мӗн мана есӗ пуршуй куртăни? Пуршуйсем хура пӳртре пурăнмаҫҫӗ.

— Мӗнпе тăранса пурăнатăн, тетӗп.

— Нимӗнпе те тăранмастăп... Ҫимесӗрех пурăнатăп.

Статисҫӗк ҫилленсе карӗ.

— Суйатăн, вӗт, есӗ! Мӗнле нимӗнпе те тăранмастăн. Ӗнер анҫах сана ӳсӗр ҫӳренине куртăм.

— Ӳсӗр ҫӳренине!—тет шăл айӗн кулса хуҫи,—ӳсӗр ҫӳренине курнă пуҫ те... Еп сана ӗҫмесӗрех пурăнатпăр тесе каламарăмҫке... Пирӗн ҫăвашăн ӗҫмесӗр пурăнмалли ҫук. Ӗҫессине ӗҫетпӗр те, унсăрăн пурăнма хӗн, анҫах ҫиессине нимӗн те ҫиместпӗр.

— Ҫимесен вилме пултаратăн, вӗт.

— Ҫиессине... кăшт ҫикелетпӗр те, анҫах мӗн ҫиетпӗр.

Ҫăваш хырăмӗнҫе шӗшлӗ те ҫӗрет тенине илтмени мӗн ес? Шӗшлӗ ҫисе пурăнатпăр.

Т̆ыха Кӗркури Мӗкӗти.

Пӑтранђӑк шывра пулӑ тытма йуратакансем шывра та путсшӑн мар, вутра та ҫунасшӑн мар.

Т̆ыха Кӗркури Мӗкӗтине Курнӑваш вулӑсӗнђе, пуринђен ытла Ҫирклӗ Шӑхаӆте, пурте пӗлеҫҫӗ. Вӑл ӗлӗк патша вӑхӑтӗнђе уђитлӗре пурӑннӑ. Револютси пуҫлансан, ђехсем вӑхӑтӗнђе шурӑ-офитсер пулса, ђехсемпе пӗрле ӗҫхалӑхне хирӗҫ кӗрешнӗ.

Ђехсен кунҫулӗ кӗске пулђӗ. Мӗкӗте те ӑҫталла сулӑнсан лайӑхраххине тупса илђӗ—Хӗрлӗ ҫара кайма та ӳркенмерӗ. Кунта кӗрсен, фронта кайса ҫапӑҫас вырӑнне, Мӗкӗте Хусантан килелле йапаласем шутарса тӑђӗ.

Хӗрлӗ ҫартан таврӑнсан Т̆ыха Мӗкӗти Тӗмер ђиркӳне тийаккӑна кӗђӗ, турӑ умӗнђе тӑрса, хӑйӗн ҫылӑхӗсемшӗн кӗлтуса, сӑвапа кӗме шухӑшларӗ. Кунта та вӑл ҫав «ҫылӑхран» тасалаймарӗ, ун ҫинђен 1924—25 мӗш ҫулсенђе «Канаш» хаҫат ҫинђе «ђиркӳри кӗнекесене сутса пӗтерет» тесе ҫапнӑђђӗ.

Тимофейсем Кермӑн архирейсем хытӑ тавлашнӑ хыҫҫӑн, вӑл Кермӑн майлӑ кайнӑшӑн, приххот ӑна тийаккӑнтан кӑларса сирпӗтрӗ.

Ҫак хура ҫӑхан Ђутай мишерӗн Шакурӑн ҫывӑх тусӗ те пулмалла: Шакур таврашне тытса хупнӑ хыҫҫӑн Шакурӑн йулташӗсене кӑларас тесе, Т̆ыха Мӗкӗти „атвакат“ пулса ҫӳрерӗ, кайран вара хӑй те Шакур ҫумне кӗрсе ларђӗ.

Ҫакӑнтан тухнӑ хыҫҫӑн вӑл татах хайӗн ултав шухӑшне пӑрахмарӗ. Тутар республӗкӗнђе лайӑх ҫӗр-улпут ҫӗрӗ пур тесе, 5-6 йалтан йатак тӑрӑх укҫа пуҫтарса ҫӳрерӗ, пирӗн тӑрмӑшранах 60-70 тенкӗ ђухӑн хресђен укҫисем шывпа йухса кайрӗҫ, хаӆ те ни ҫӗрӗ ни укҫи ҫук.

Ҫак ҫын йулашкинђен Аслӑ-Патӗрйел пуӆнитсине савхоса кӗрсе ӳкрӗ татах ултавлӑ шухӑшӗ пӗтмен пулмалла. Халӑхсем вӑл ҫавӑнта кӗрсе ӳкнине илтсен пур-те тӗлӗнсе кайса калаҫҫӗ: йепле Совет влаҫӗ ҫав ҫынна ҫавӑнта пӗртте ыйтса тӗпђемесӗрех персе ђиквӗ, унтан ӑна тимӗр шӑпӑр илсе, кит хытса ларићђен, шӑлса тасатас пулат̆. Хӑйне ђухӑн хресђенсене улталаса, укҫа пуҫтарса ҫӳренешӗн, сут аллине парас пулат̆.

«Капкӑнран». Вӑт тӑк Т̆ыха Кӗркури Мӗкӗти. Пур ӗҫе те маттур: турра та кӗлтӑват̆, халӑха та вӗрентет, халӑхран укҫа та пухса, хӑй кӑсйине ђикет, офитсер пулса Хӗрлӗ сара хирӗҫ те ҫапӑҫат̆, хаӆ тата халӑха сыват̆ат̆. Ытла сыватсах пӑрахат̆ђен, илесђӗ ӑна пуӆнитсӑран. Сывлӑх Кӑмиссариатђӗ мӗнле-ши?

ҪАРА ҪЕРҪИ.

Вут тӗртекене вирлӗрех айӑпламалла.

Кӗҫӗн-Шетмӗ ђиркӳвӗ ҫунса кайнӑ. Турра ӗненекенсем ку инкеке турӑ йанӑ пуӆ, теҫҫӗ.

(Йалкор).

— Ай, турӑ! Пӗтрӗмӗрех, ђиркӳ ҫунат̆. Сӳнтерес пулат̆.

— Ана сӳнтерме йурамаст̆. Ӑна, ҫынсем ђиркӳве ҫӳреме пӑрахнине кура, тарӑхнипе турри хӑйех тӗртсе йанӑ.

— Кам тӗртсе йанӑ, тетӗн. Ах, тӗрменеђӗ ӑна. Ҫӗпӗрех йамалла. Халӗ сут тавраш ҫемҫелсе карӗҫке, ӗлӗк пулсан...

— Турӑ тӗртсе йанӑ, тетӗп.

— А-а, турӑ!?

Мыттарниксем.

— Ей, йулташ, тепĕр ҫейникне тултарса парка!

Хĕрлĕ кăшман пек хĕрелсе кайнă Уҫăп питĕнҫен тар шапăртаттарса йухаҫ. Вăл, тар йухнине пăхмасăр ҫаппах вĕри ҫейе куҫĕсене хĕстерсех вĕре-вĕре ĕҫет.

— Кăрлик хÿресĕр, ҫилхесĕр лашине лайăх хакпа сутма пултарнинҫен тĕлĕнĕн есĕ. Вăл мĕн! Унтан лайăхраххине те курнă епĕр. Астăватăн пуҫ ес мăкăн ула кĕсре пурҫĕ? Сулахай хăлхи ҫинҫе ҫăпан пурҫĕ? Вилме пуҫланăскере алă тенкĕ парса илнĕҫĕ.

Астăватăн? Ҫав кĕсрене епĕ хура йăйăрпа улăштарса ҫине утмăл тенкĕ илтĕм.

Айăрĕ те айăрҫĕ ҫав,—кĕсререн те ваҫартарах. Пуш ҫунана тургаймасҫĕ. Ҫапма тапратсан усал арăм пек ҫăхăмлама тапратаҫҫĕ. Пасартан таврăннă ҫухне, аран аран пĕр йала ҫитрĕмĕр. Ҫул ҫинҫех вилсе кайаҫ пуҫ терĕмĕр те. Йалта хваттере кĕрсе выртрăмăр та, ҫейсем ĕҫкелесен пăхатпăр—пирĕн лаша сывламасҫ те. Вилсех кайнă. Хÿринҫен туртсан та ҫун кĕреймерĕ.

— Мĕн тăвас куппа?—тетпĕр.

— Мĕн тумалла! Сутас пулаҫ, тет ман йулташ.

— Кама сутас? Никам та илес ҫук вăл вилнĕ йапалана.

— Илекен пур, терĕ йулташ куҫĕсене мăҫ мăҫ хупса.

— Кам илеҫ?

— Совет илет, терĕ.

— Ҫилĕм тумаи?

— Ҫилĕм тума мар. Ак, сана каласа парам. Еп хам лашана сутрăм, вĕт.

— Сутрăн.

— Епĕ пĕр лашашăн страхховккă укҫи тÿленĕ, вĕт.

— Тÿленĕ.

— Совета улталанăшăн ҫылăх пулмасҫ, вĕт.

— Пулмасҫ.

— Апла пулсан ак мĕн тупăр епĕр. Ялсовет мачпа кумаллă. Кайапăр та унта, лаша вилни ҫинҫен хут туса килĕпĕр. Туртăнкаларах тăрсан, ĕҫтерĕпĕр. Шеҫ-и мĕн—хамăр та ĕҫетпĕр, вĕт, ерехне.

Калавă—тунă. Ҫав хутпа страхакнĕтран укҫа илсе килетпĕр. Шăп 100 тенкĕ укҫа. Вилнĕ лашашăн укҫа илтĕмĕр. Курни ҫавăн пек ăслă ҫынсене есĕ тĕнҫере?

— Апла есĕр совета та тăм шăхлиҫă тыттарма пултарнă. Маттур!

— Пултармасăр. Ăна пултарас ҫук—анне хырăмĕнҫен те тухас мар.

Ак мĕнле ĕҫсем пулма пултараҫҫĕ пирĕн ремисра, есĕ хÿресĕр, ҫилхисĕр лашана сутса йанинҫен тĕлĕнетĕн.

Ҫапла ҫав. Ахаҫ мар пире „мыттарниксем" теҫҫĕ. ИЛСАРАИ.

Тĕлĕнмелле вăрăсем.

Йăлăмкасри вуламалли ҫурта кĕнеки, саветуйушҫи мĕнĕпех вăрласа кайнă. Тупэта та вăрланă. Еп хам, Йалăмкас ҫыннисем рыҫаксемпех вăррисене шыраса ҫÿренине куртăм. Вĕсем мана: есĕ мари пирĕн вуламалли ҫурта вăрланă вăрă? терĕҫ. Пĕри рыҫакпа пĕртакках хураҫĕ мана. Аран: епĕ вăрă мар, воҫнăй професси ҫынни, терĕм. Е-е-е, куваҫнăй профессăр, кăна тивме йурамасҫ, терĕҫ те утрĕҫ малалла. Хам утрăм кантуралла. Унта ман как рас ĕҫ пурҫĕ. Кĕтĕм. Шăпах. Никам та ҫук. Сасартăк хаарр, турĕ. Ку йăтă пулĕ, тесе, шартах сикрĕм. Ҫĕркуҫҫи вăйĕсем шалтăрах пĕтрĕҫ. Ҫавăрăнса пăхсан: ҫын ҫывăрса ларнине курах карăм. Ку ывăннă ҫын пуҫ тесе: йĕрипев: ес тешурни ҫлен мар пуҫ? тесе ыйтрăм.

— Ҫук, еп испаҫ, терĕ.

— Испаҫ? Вăрăсенҫен мĕнле хăтăлса йултăн?

— Мĕнле вăрăсенҫен?

— Сана вуламалла ҫурҫĕ мĕнĕпех вăрăсем вăрласа кайнă, тесе, йалти ҫынсем риҫаксемпех шыраҫҫĕ.

— Суйеҫҫĕ вĕсем, иртнĕ мăнкунта ҫеҫ свеши хаҫатсем кайса патăм, терĕ те, каллех харлаттарса ҫывăрса карĕ.

— Ну, сывă пул еппин, ыйхă ҫăпти! терĕм те, тухса утрăм епĕ те кантуртан. Ҫ. ШĂПҪĂК.

Страхховккă.

— Ма ес лашуна тăрантармастăн. Лаша та апата пăхаҫ, тенине илтмени мĕн ес. Выҫă пирки, лашу вилсе кайсан!

— Вилин. Вилсен те... вăл страхховаҫ тунăскер. Ф. П.

Ĕç çырăвĕ.

Май килнĕ ҫух ĕçĕпĕр,
Май килнĕ ҫух—ĕçлĕпĕр..
(Йурăран).

Çакăн пек ĕçлеççĕ нумайĕшĕ. Караҫ вулăсĕнҫи милитси наҫҫалнĕкĕ— Автейĕв та ĕçшĕн вилет.

Вăл та ĕç çырăвĕпе питĕ ҫаплă вара.

Ĕç çырăвĕ.

(Вырăслах çырнă).

Т. Белокуров.

Этого товарища Петрова ты возми (хăй пекех çырас) на учет профсоюзов яко бы в апреле месяце и сделай отметку на 24 странице о прибытии в апреле месяце. После чего на стр. № 7 за апрель, май, июнь, июль, август, сентябрь, октябрь, ноябрь, декабрь и на стр. 8 январь сделай отметку — „безработный" я лично с тобой ужо (ерех илсе пырсан!.. Н. В.) переговорю почему это так нужно.
11/II-26 г. с приветом Авдеев.

Ку ĕç çырăвĕ те таса вара. Кăмиссарĕнниҫен темиçе хут та мала. Вăрттăн ĕçсене йĕрлеме ăста иккен вăл.

Ахалрен мар—пурнăçĕ те йарăнса кăна пырать.

* *
*

Ех, илемлĕске çав Караҫ сывăхĕнҫи (Шуп. у.) çĕрсем те. Хĕлле пушшех ытармалла мар. Шап шурă йур. Анлă хирсем.. Тайлăмсем, сăртсем. Ех, аванçке катаҫҫи йарăнма.

Вулăсри милитси наҫҫаҫнĕкĕн пăшалĕ вуҫвĕрĕ пур. Вăрмана кайас та, мулкаҫ тытас... Анҫах йĕлтĕр кирлĕ.

Мĕн тăвас!

Иалта Петров текен алăсти, каскалама пĕлекен пур. Вăл калама çук, ытарма çук, йĕлтĕр аван тăвать.

Милитси Петров патне... Ма кайас мар. Вăл хăватлă çын вĕт. Пĕшаллă. Иатлă.

Хăйне ваҫҫи йĕлтĕр саккас парать.

— Лайăхрах туса пар. Арăма ваҫҫи те, пур милитсионера ваҫҫи те туса тар. Сана унтăн... ахаҫ тумăпăр, тет хăй.

Вулăсри профуполномоҫҫĕннăй унтан иртейес çук. Ларать те, ĕçлĕ çыру çыра пуçлать.

— Снаш что, Петров хăта. Есĕ йутçынах мар, йĕлтĕр, снаҫҫăт, саккас. Сана ăшă кĕтес тупса парăпăр. Сана профсойус тайнине открыть туса парам.

Çапла та, çапла... есĕ профсойусра тăман пулин те, сташлă рапоҫҫи пулан. Алăсти ĕçшĕн налок тӳлемесĕр ĕçлĕн... Тата халĕ ĕçсĕр тăрса йулҫĕ, тесе песрапотный хисепĕпе ĕç пиршинҫен кăларса укçа илсе тăмалла тăватпăр...

— Ну, кӳр, пĕр алтăр сăра!

Килĕшрĕç Ĕç пулҫĕ те.

* *
*

Акă мĕншĕн иккен «ужо» калаçмалли.

* *
*

Ытарма çук илемлĕ сăрт. Виç тăват йĕлтĕрсĕ. Автейĕв нихăшĕнҫен маттура.

— Епĕр... епĕр саккаспа халăх ĕçне тума çуралнă çынсем. Харăс 7 8 мулкаҫ тытатпăр. Йĕлтĕр те хатĕр, мулкаҫ та тытатăп, Петров хăта та укçа илсе тăмалла песрапотнăй ..

Их-хах-ха-ха!.. тесе, çыраналлă ахăрса йарăнса анать.

Анҫах манҫĕ мĕн вăл „Совет" Капкăнне?

7-8 мулкаҫ тытаканах, шолтра ĕç çырăвĕ çыраканах пуçĕпех çакланакан.

Унтан шуҫăкланнса хăтăлса кăтарт.

Вара мĕн пулĕ.

— Ĕç хуҫĕ!.. Вĕрентес пулать-ха нумайĕшне вĕретмелле ĕç çырăвĕсĕмпе выҫама.

ВАÇАНККА.

Улшуçпа хресҫен.

Улшуç. Лашу санăн миçе çулта? Картăҫки пури?

Хресҫен. Карҫăкки çук, хамăн карҫăк пур. Лаша карҫăккипе мĕн тăван ес?

Улшуç. Карҫăк мар,. картăҫки тетĕп.

Иашур.

Лапра-ҫӗпре типиђђен

Уҫпенире, Шăматри
Вăта ҫӗрти сыпăкра
Пуп ђӳређи тĕлĕнђе
Хурал пӳрђĕ патĕнђе
Исполкомри пĕр ђĕлен,
Лапра ҫĕпре типиђђен,
Вырта вырта йăванат̆,
Выртса тăни курăнмаст̆.

Курпун Петĕр тенĕскер,
Авсат хуҫа тухнăскер,
Утса пырат̆ ҫулпала,
Тĕлĕнмелле йапала,
Исполкомри пĕр ђĕлен,
Лапра ҫĕпре типиђђен,
Вырта-вырта йăванат̆,
Выртса тăни курăнмаст̆.

— Мĕншĕн ес йăванан, тет?
— Ма йăванас мар ман, тет,
Русско корки поҫнин тет,
Еп те унта пултăм, тет.
Хайхи Курпун Петĕр те,
Ҫӳҫрен йарса илет те:
Айта цĕрле йăванма,
Куҫ хупмалла выђама,
Лапрашĕнђи сысна пек
Хайне пăхсан усал пек,

Тапкăпа та тепкĕпе
Лаппи Лекҫи Мирунне

МАЂ.

ВЫРĂНТА (йуптару).

Сăрлă хапха умĕнђе
Ҫапă купи тăрринђе
Пĕр кађака путекки
Пур вăйĕпе сухăрат̆:

Епĕ кунта улăхрăм,
Сирĕн вађђи вырăн ҫук,
Мĕн пур кунти пурлăхăм
Текех сире тивес ҫук.

Ман урари калушне
Кунта пыђђăк тивеймĕ,
Таса йака тумтире
Хура пăрҫа йерeймĕ.

Ҫакна илтсен выђăхсем
Ҫавра ҫил пек кĕрлерĕҫ,
Каҫăр сăмса сыснисем
Путек ҫулне йĕрлерĕҫ.

Унăн мухтав сăмахне
Виҫе-виҫе пăхрĕҫĕ,
Аслă, ђаплă вырăнтан
Сирпĕнтерсе йађĕҫĕ.

Пăрҫа йерме тумтирне
Хупрĕҫ кăна витене;
Ун вырăнне ĕҫлеме
Лартрĕҫ сурăх путекне.

Халăх пană вырăнпа
Ытлах мухтанмалла мар,
Ĕҫне тĕрĕс тумасан
Пайан кунах вăл сан мар.

Ҫ. ШĂПЂĂК.

Кӑтра Павӑл ӗмӗҫӗ.

С. Йулташ ҫырать:

Кӗҫӗн Тукташри (Аттай в.) Кӑтра Павӑл суйа сӑмахсем сарса ҫӳрет. «Анклире, сапастовккӑ майӗпе, комсомол пӗтнӗ хаҫ», тет. Тата шкула кайакан аҫасене: «Хаҫ шкула ан кайӑр, шкулта хаҫ хӗрес ҫакакансене винават тӑваҫҫӗ, акӑ пулӗ вӑхӑт, ун ҫухне шкула ҫӳрӗр», тет. Вӑл хӑй пуйан пурӑнаканскер, йалти ҫынсен тыррисене вырӑхсемпе ҫӗмӗрттерсе пурӑнать, ытти сийенсем те тӑвать».

Кӑтра Павӑл «Капкӑна» ҫакланассине ӗмӗтленмен те пуҫ, мур! Вӑл Анклири комсомола мар, „Капкӑна" та пӗтерӗҫҫӗ те, анҫах «Капкӑн» Кӑтра Павӑлран ҫивӗҫрех.

Хӑвӑрт пуйакан.

Сар ҫеҫек пӗлтернӗ тӑрӑх:

Угар йалӗнҫи (Туҫи в.) пӗр усламӑҫ-Кӗшпӗл Павӗл Елекҫи, Вӑрнарти коопературан 6 пуса илсе килнӗ тапака 8 пуса, 11 пуслӑх пируса 15 пуса сутать. Ҫигменнине тата ҫамрӑк аҫасене ҫӑмарталла пируссем, канфетсем парса, усал ӗҫсем тума вӗрентрӗ. Хӑй турра ӗненнӗ пек пулса, комсомолсене йунӑхса ҫӳрет. Ҫынна улталасах пуйса кайрӗ Кӗшпӗл Елекҫи.

„Капкӑна" лексен пуйасси пӗтрӗ вара! Тавар хакӗсене хӑпартса сутнӑшӑн темӗн ҫул турра ӗненсен те, тимӗр ҫатмаран ҫӑлӑнас ҫук вӑл.

Йара пар, Елекҫи!

«Ҫиркӳллӗ Кӑкшӑмри (Нурӑс в.) Мӑн Усӑп хӑйӗн 18 ҫулхи Елекҫине пӗр ҫул хушшинче 3 арӑм илсе парӗ. Виҫӗ хут хӗр илсе, виҫӗ хут хӗр панӑранпа мӑн Усӑп ҫухӑнланасах йулҫӗ. Йулашки арӑмӗ Елекҫийа кӑштах ҫӗҫҫепе ҫиксе пӑрахман», тесе ҫырать Тӑпра.

Вӑт тӑк, Елекҫи! Кашни ҫул виҫҫӗ авланса та, 25 ҫула ҫитетҫен 24 арӑмпа пурӑнса куратӑн. Кашнинҫен пӗр кӗпе, пӗр йӗмилсе йулсан та... Ие кашнинҫен пӗрер аҫа пулсан, ӑҫта кайса кӗрӗн ес?..

Вӑрманти ҫверсем.

Тилӗ те, кашкӑр та, мулкаҫ та ҫвер. Неҫли пӗлтернӗ тӑрӑх Тури Пӳртлӗ йал патӗнҫи вӗрманта урӑх йышши ҫвер те пур иккен.

«Поровкковпа Толмаҫев леҫникре пурӑнса, ҫверех тухса кайрӗҫ. Нумайах пулмасть Толмаҫев пӗр ҫынна Алпуттӑв йатлӑскерне, киншалпа ҫикнӗ, икӗ аҫана ӗсӗрпе хӗнесе тӑкнӑ. Поровкков йаланах Шӑкаке ӗҫме ҫупать. „Шӑкаҫпе Пӳртлӗре пӗрер ҫын вӗлерепех" тесе мухтанса ҫӳрет Поровкков. Кӑҫал 3-шер пӑт илсе, 40 ӗне вӑрмана йартарҫӗ, вӑл ӗнесемпе. халӑх ҫаранӗсене ҫитерсе йаҫӗ. Мӗн ҫуклӗ ҫынна хӗнесе мӑйӑр туртса илҫӗҫ пуҫ кӑҫал ҫак ҫверсем»?

Поровкковпа Толмаҫев ҫвер пулсан та, вӗсене тытмалли «Капкӑнсем» ҫирӗп-ха. Тилӗсене тытма хӗн, кун пек ухмаксене хуликансене тытнӑ пекех тытма ҫӑмӑл.

Совпартшколтан тухса, самокон тума.

Совпартшкол урӑ йалти ирсӗрлӗхсемпе кӗрешме. йала ҫутӑ кӗртме, йалта ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тума вӗрентме хатӗрлесе тӑратпӑр теҫҫӗ Шупашкарта.

Анҫах Совпартшколтан вĕренсе тухнă Митак Хветĕрĕ шалтах урăхла ăнланнă Совпартшколта вĕрентнине. Пăрҫа Йăванĕ ҫапла ҫырса тĕлĕнтерет пире:

„Совпартшколăн II-мĕш сыпăкĕнҫе вĕренсе тухнă Митак Хветĕрĕ (Ианкарас, Елĕк вул) сăмакон йухтарса, услам тума тытăнҫĕ. Хăй те кунĕн ҫĕрĕнех ĕҫет. Халăх хушшинҫе пĕр пуслăх та ĕҫлемен".

Мĕн ĕҫлеме пултартăр ĕнтĕ вăл самокон савăҫĕ лартнăскĕр? Ун пеккисем ĕҫлеменни ĕҫлемениҫен авантарах. Ĕлĕкренлех тĕттĕмре пурăнакан Ианкарасра Совпартшколта вĕренсе тухнисене самокон тумасăр та ĕҫ ҫитмелле ĕнтĕ те, мĕн тăвас тен? „Капкăн" тӳрлетĕ!

Арăм сутти тăвакан.

Мĕнле йапаларан та пулин усă курасшăнах ҫунаҫҫĕ хăшпĕр усламăҫсем. Анҫах хĕрарăмла сутă тунине пит сайра илтме пулать. Ун пек киресĕр ҫын ҫинҫен 8 х. пĕлтерет:

„Ҫиркӳллĕ Ҫулаҫра (Елĕк в.) арăм сутти тăвакан Иван Алексантрăв пурăнать. Вăл халь тăватăмĕш хут авланҫĕ. Авлансан ĕҫлеттерет ĕҫлеттерет те, кайран хăваласа кăларать, йапалисене илсе йулать. 1925-мĕш ҫулта ҫак улшуҫ Сормваррин҄ҫен Пăлаки йатлă хĕре илҫĕ. Пĕр уйăх усрасан, уй ĕҫĕсене пĕтерсе кĕрсен, Пăлакийе хăвласа йарать, тӳшеккине тытса йулать. Сута парсан сут та ҫак улшуҫ майлах пулҫĕ, тӳшеке илсе памалла тумарĕ. Мĕнле вĕҫне тупасши ҫак ĕҫĕнне"?

Паллах, мĕнле тупасси. Иетĕрне уйесĕнҫи прокурор ҫак ĕҫе халех тĕрĕслĕ те, кам айăплисене «Капкăнра» йаланах вырăн тупса парăпăр.

Хĕрлĕ автан ҫаканĕ.

24-мĕш уҫасткăри страхакĕнт сырусĕ пĕлтĕр, Куракăшри Улпуттăвран лаша страхховать тума тесе, 10 тенкĕ укҫа илҫĕ. Ҫак укҫаран йулнине—4 т. 28 пуса „сан ҫурт на топровоҫнă страхховать тăвап" тесе, Улпуттăва тавăрса памарĕ, квиттанси ыйтсан—квиттанси те памарĕ. Паллах, страхакĕнт сырусси (Николай Проххонҫкин) ҫак укҫана хăй кăсйине улталаса ҫиктĕрĕ»—тесе ҫырать А. Иалкор.

Топровоҫнă страхховать тăвап тесе суйман ĕнтĕ вăл, хăй кăсйине лайăх, страхховать тунă вăл топровоҫнă!

Манах Мĕтри.

Етем тени вăл хăй вилĕмĕ хăҫан килессине нихҫан та пĕлеймест. Арăмпа хăҫан йатлаҫмалла пулассине те пĕлейместпĕр те, вилĕм ҫинҫен ăҫтан пĕлме пултарăпăр.

«Уйкас-Асламлсри. Манах Мĕтри, епĕ кăҫал хĕлле вилетĕп тесе, хăй йатак ҫĕрне ыраш акман. Сарай сене, тум ҫуртсене веҫех пуп патне панă. Хăй хăш ҫухне ҫара пакартанăх ҫӳрет. Ма апла ҫӳретĕн? тесе ыйтсан: мана турă хушнă», тет.

Ҫара пакаратăн ҫӳреме ăна турă хушнă пуль те, анҫах ҫĕрне акса хăвармаллаҫĕ. Кăҫал хĕлле вилмесен кам тăрантарĕ ăна ҫара ҫерҫийе. Вилĕм хăҫан килессине Манах Мĕтри мар, епĕр те пĕлместпĕр.

Ҫутта тухнă комсомолĕс.

Хăшĕ-пĕри шухăшлаҫҫĕ: паттăрланса ҫӳрекенсем Патăрйел уйесĕнҫе нумай теҫҫĕ. Анҫах тĕпĕ йĕрĕпех шухăшласа пăхсан, Шупашкар уйесĕ те Патăрйел уйесĕнҫен, тата ытти Совет Сойусĕнҫи паттăр ҫынсем пур вырăнсенҫен кайа йулман иккен.

Уйесри пур вырăнсенҫен те ҫакăн пек ҫырусем килкелеҫҫĕ:

„Самук-кассинҫе (Шуп. у., Тукаш вул.) паттăрланса ҫӳрекен ҫамрăксем пур. Акă вĕсенҫен пĕри—Тавит Карили кама курать, ҫавна ҫĕҫĕпе ҫикетĕп тесе ҫӳрет. Халĕ пĕр каҫ сăмакунакă ĕҫсе тухнă та, ҫĕҫĕпе ҫикетĕп тесе, хĕрсеве,—аҫасене хăратса пĕтернĕ. Вăл самоконкă йухтарма та пит маҫтăр. Комсомолта 3 ҫул тăрать пулсан та, пуҫне ҫутă кĕмен пулмалла", тет Ала.

Мĕнле ҫутă кĕмен? Кĕнĕҫке. Ҫутти кĕмесĕрех ҫапла атаҫса ҫӳремĕҫҫĕ. Ҫиййĕнҫен тата унăн «ҫуттин хуранĕ» те пур. Ҫутта тухнах ĕнтĕ вăл.

ЫТЛАШШИ ЁÇ.

— Хĕрĕм, çўпçува упăшку патне леçес-и?
— Мĕн тума? Пурĕ-пĕрех тепĕр ернерен кайалла килмелле пулаť. Вырттăрах.

Решим вутти.

Уѣрештенире решим тусан, киле ваѣѣи те йураť, теççĕ тилĕ йеверлĕ пуçлăхсем.

Пикшихра (Щăхасан вул.) шкул пăхаканĕ пулнăскер Алексантр Петри Хусана вĕренме кайас умĕн, шкул вутти ѣылай йулнине кура, 3 лав вутă Канашри арăмĕ патне леçсе хăварнă. Апла тума йурамасť тесен; „не ваше тело“, тесе хураť, тет Ахах.

Пирĕн «тело» (ўт) мар çав сиввине ѣăтаканни, шкул аѣисен ѣăтмалла пулаť. Анѣах тирпейлĕх решимне апла туни пирĕн «телăсене» те ыраттараť. Çавăнпа сана калатпăр: Совет укçипе вĕренме кайасси те „не ваше телă!“ Илтетни?

Ерехпе шăварнă купăста.

Ерехпе шăварнă купăста хўхĕм пулаť, тесе пĕлтерет пире Шивири йаттă кореспонтент.

„Шĕнерпуç вулăсĕнѣи Ѣăрăш-Туçа йалĕнѣе иртнĕ çулсенѣе кĕтў вырттарнă вырăнсене купăста пахѣи тума тара паѣĕç. Купăсти хўхĕм пултăр тесе, пĕрик ѣетвĕрт ерехле парса халăх ĕçкĕ ĕçрĕ. Купăсти ѣăнах лайăх пулѣĕ“, тет.

Ерехпе шăварнă купăста хўхĕм пулаť еппин. Хўхĕм пулсан та, купăстинѣен шăршă перет. Шăрши пирĕн кĕнѣелере те пырса çапрĕ. Претçетаттĕлĕ те сирĕн купăста пуçлă пулмалла. Хĕлле, çĕнĕ суйлавра, турамалла пулаť.

Укçине турри йатса тухса кайни.

Халлапри пек, йалта карђӑкпа старик пурӑнӑ. Вӗсенӗн икӗ ывӑлӗ пулнӑ, хӑйсем вӗсем турра кӗлтӑвакан çынсем пулнӑ. Вылӑх-ђӗрлӗхӗсем вӗсенӗн пӗр ӗнинђен пуçве урӑх нимӗн те пулман. Старикки лаша илме тесе, ӗнине сутса укçа тунӑ.

Карђӑк, çак укçана пуçтарса хур-хт, тесе усрама укçине карђӑк аллине парать.

— Иурать, епӗ çакӑнта турӑш (турӑ) хыçне хурам, уата турӑ сыхлать, никам та тивес çук, тет.

Ывӑлӗ калать:

— Анне, есӗ турӑ çине кӑна ан шан, ху та астукалах тӑр, тет.

Çаксем тепӗр кунӗ килтен тухса кайаççӗ. Старикки те пус килӗ, кӳрше, калаçса ларма кайать. Килне карђӑкӗ анђах пӗр пӗђђенçи тӑрса йулать. Çавӑн ђухне кӗсем патне пӗре турра кӗл туса çӳрекен çын пырса кӗрет. Карђӑкӗ ӑна, йепле çыннине палласа, хисеплесе йышӑнать, хӑна тӑвать.

— Есӗ турра кӗлтуса çӳрекен çын, ӳт-аш çимеҫтӗн пулӗ?—тет, типӗ тытаттӑр, тесе шухӑшласа.

— Çимеҫтӗп çав, тет ку та карђӑка хирӗç.

— Апла пулсан, епӗ сан вађђи çимешкӗн нӳхрепрен хӑйар илсе килемха, тет те, пӳртрен тухса кайать.

Карђӑкӗ тухса кайсанах, ку çынни пур çӗре те ђасах шырама пуçлать. Турӑш хыçне пӑхса илет. Унта ӗне сутса тунӑ укçа выртнине курсан, ђасах илсе кӗсйине ђикет. Карђӑкӗ ӑна-кӑна шухӑшламасӑр, çыннине хӑйар çитерсе тӑрантарсан, ӑсатса йарать.

Ашшӗ кӳршӗре лаша калаçсан, ађине килне укçа илме йарать. Ађи килне тавӑрнсан:

— Атте лаша калаçнӑ, укçа илсе кил, тесе каласа йађӗ, тет.

Амӑшӗ укçине хунӑ çӗре илме пырсан, пӑхать те, укçи хунӑ çӗрте çук пулать.

— Ешир хӑвӑр илсе тухса кайнӑ пулӗ? Аçу илсе каймантӑр-çке?—тесе, ыйтать.

Ывӑлӗ:

— Епӗ те илмен, атте те илмен, мӗншӗн тесен, епир килте пулман, тет.

Ывӑлӗ хӑй шӑллӗне:—пырха, аттене ђӗнсе кил-ха, тесе, ашшӗне ђӗнсе килтерттерет.

Укçисем хайхисенӗн ђӑнах та çук, çук та çук, ниçтан шыраса тупаймаççӗ. Вара, аптӑранӑ йенне, карђӑкран:

— Пирӗн патра пайан кам та пулсан килмерӗ пуђ-çке?—тесе ыйтса пӗлеççӗ.

— Ытлашши çын пайан никам та, килменђӗ. Пӗр çын килђӗ те, вӑл илес çук, тет.

— Вӑл вара мӗскерле çынђӗ? тесе, ыйтса пӗлеççӗ.

— Вӑл турра кӗл туса çӳрекен çын, аван çын, çыннӑнне тивес çук, тет амӑшӗ.

Ывӑлӗ те:

— Анне, епӗ сана ӗлӗкех каласаттӑм:—„турру çине кӑна шанса ан тӑр, ху та астукалах тӑр",—терӗм. Санӑн укçуна, хунӑ çӗртен, турру йатса тухса кайнӑ, тет. ИВ. ИУРККИН.

Укçасӑр пӑрçа.

Икӗ ађа пивнойа кӗрсе:

— Сӑра литтӑрӗ мӗн ђухлӗ тӑрать, тесе ыйтаççӗ.

— 45 пус.

— Тӑварланӑ пӑрçана мӗн ђула паратӑр тата?

— Пӑрçана ахалех паратпӑр.

— Апла пулсан пире пӗрер кӗрепенкке турттарса парӑрха.

П. Ешмери.

КЕРКУННЕХИ УХУТА.

Аталан леш йенҫи кулесенҫе кайак кавакал сахал, теҫҫе кҫал. Ҫаванпа ухутниксем каймасерен пуша таврӑнаҫҫӗ.

(ҪХУЛАКОР)



Пӗр кӑвакалӗ. Хӗвел такҫанах тухнӑ. Айта кайса тӑратар пуҫ ухутникне, уҫрешгенийе вахатра ҫитеймӗ. Пуҫлӑхсем йатлӗҫ тата.

К Ӳ Р Ш Ӗ С Е М.

Кӳршӗне кӳршӗн
Калаҫмалли тупӑнатех ӗнтӗ.
Ава
Иарман арӑмӗ Урине
Сарнӑ йанӑ урлӑ ҫӑварне:
— Сан упӑшку ҫапла!
Сан упӑшку капла!
Шуйттан! Ҫӗр ҫӑтасшӗ!
Ҫава патне кайасшӗ!
Тесе вӑрҫать вӑл пӗтӗмпе
Хайӗн кӳршӗ Тимук арӑмпе.
Ҫав ӗнтӗ—хӗрарӑм вӑрҫма тапрансан
Итлеме ҫеҫ ан ӳркен.
Тимук арӗм те калаҫма тытӑнсан
Сӑмахсӑр аптраканнийех мар
иккен:
Уринене хирӗҫ вӑл
Витгерсе кӑна пырать сӑмахпа,
Кассисем—Мӗн пулнӑ та, мӗн
пулнӑ, тесе
Шӑв шав ҫине ҫупаҫҫӗ урампа.
— Ӑра! Есир мӗн йантрататӑр,
Терӗ тӗлӗнсе Никантӑр.
— Ула йатта мурӑн Тимукӗ,—
шуйттанӗ
Ухатара ҫухатса килҫӗ,
Тесе хуҫӗ
Иарман арӑмӗ—куштанӗ
— Ей! тупнӑ тата хӑйсем
калаҫмалли,
Терӗ йеррипен
Кукӑр Марукӑн Михали.
— Тупнӑ ҫав! тет Урине: Тупнӑ,
Вӑрҫса калаҫмаллинех тупнӑ,
Пӗтерҫӗ йатта... Ех! йаттӑмҫӑм!
Етем ӑслӑҫҫӗ вӗт, пассамҫӑм:
Урайне аҫа исвӗртсен
Ҫуласа типӗтсех илеҫҫӗ,
Кипкесем те тасаҫҫӗ...
Ех! йаттӑм!..
— Урай-кипке тасатма
Иаттин ӑсӗ ҫитнӗ те,
Хайӗн ҫитеймен, тесе куҫӗ
комсомол Кириллне,
Лешӗ ӑна илтрӗ те
Утгара паҫӗ килелле.

Н. ЕВТОКИМӐВ.

Снаţţоксем.

Пирĕн тĕрлĕрен ушкăнсем пит нумай, авţах вĕсен ĕçĕсем питех палăрмаççĕ. Хăш-пĕр çынсем хăйсем мĕнле мĕнле ушкăнсенţе тăнине те пĕлмеççĕ.

— Мĕнле метаţсем çакса тултарнă есĕ?

— Метаţсем мар вĕсем—снаţţоксем. Ку Авиахим снаţţокĕ, ку Мопăрăн, ку Ратио тусĕсен, ку турра ĕненменсен, ку аţа тусĕсен, ку хут пĕлменнипе кĕрешекен, ку... ку мĕнţе-ха. Кăна манса кайнă. Кăмакара манса йулнă пашалăва çимесĕрех манса кайнă.

Хӳтĕ вырăнта.

(Iaçнă).

Вĕри шăрăх хĕвелте
Сысна йăвăç айĕнţе
Ун тĕллипе сухăнра
Выртрĕ вăл ţăсăлса.
— «Ай! ай... пайан аванçке,
Хĕвел çутти те илемлĕ,
Кунта вăрттăн кĕтесре
Никам та мана кураймĕ,
Кураймĕ, ţăрмантараймĕ»—
Çав вăхăтрах куç умĕнţе,
Курţĕ сысна курите.
Куритери ерех пăрşкне
— „Ал аван йапала!
Çителĕклĕ сыпăпăр,
Хĕрĕнкĕрех пулсан та
Иуррине те йурлăпăр!»—
Сыпассине сыпмаллах,
Сыпрĕ сысна курмалла,
Ĕçсен пурте паллах
Тытăнаççĕ харкашма.
Пирĕв сысна ĕсрипе
Иаţĕ йурра пикенсе.
Пăртак тăрсан çилленсе
Тытăнţĕ ку харкашма.
Çав вăхăтра кĕтӳçĕ
Таçтан курнă сысвана
Хăйĕн варăм пушипе
Туртрĕ тире çурмалла.

———

Çавнашкалах пивнойсенţе
Вăрттăн хӳтĕ вырăнта,
Хуликансем ĕçеççĕ те
Тытăнаççĕ харкашма.

АЛАКĔР В.

Сывлăх пăхтарнă çĕрте.

— Ну, Муççа, сана пăхнă ţухне тухтăр шаккари?

— Хытă шаккарĕ.

— Хăш тĕлтен хытăрах сана шаккарĕ?

— Кăсйаран хытă шаккарĕ.

Ексамĕнта.

— Ну, есĕ Çеçмековţи-ха çак ес, калаха пире миçе ţаçĭ çвета?

— Иккĕ, пĕри пирĕн СССР, тепри пуршуйсен Лики тени пулаţ.

С. ЙАРТИК.

Кукша Йăван.

Кукша Иăван салтакран таврăннă.
Иалти краштăнсем курма пухăннă.
— Пит вырăсла вĕренсе карăм, тесе мухтанаţ Иăван.
— «Пăрçа» мĕнле, тесе ыйтаççĕ унтан.
Лешĕ:
— „Корох“ штолĕ, тет.
Курма пынисем каллех:
— „Иасмăк“ мĕнле теççĕ.
Леш Кукши:
— Пол корох штолĕ, терĕ.

Хур-сăмси.

Нумай пӗлни пӗтерђӗ.



— Иван Иванђ, есӗ ҫырӑва нађар вӗреннӗ курӑнат, сана вӗреннӗ ҫӗртен кӑларса йанӑха вӗт?

— Мана кӑларса йађӗ; те, анђах нађар вӗреннӗшӗн мар, вӗрентекенђен аван пӗлнӗрен.

Патирек йал совеђӗн приххотпа расхут кӗнеки.

(Тукаш в., Шуп. у.).

Расхут.

1. Йал совет претҫетаттӗлӗ Ҫеркей Ҫтапанђ, йала цынӑшӑн пупа 3 тенкӗ халӑх укҫинђен тӳлленӗ.

2. Уртем Хриссанӑв панӑ укҫапа халӑх ҫинђе шушкӑ илсе ҫинӗ—3 т. 40 пус.

3. Ҫеркей Савелйӗв панӑ укҫапа халӑх ҫинђе шушкӑ илсе ҫинӗ—3 т. 40 п.

4. Михханя Феотӑрӑвран илнӗ укҫапа халӑх ҫинђе шушкӑ илсе ҫинӗ—3 т. 40 п.

5. Кађака сутнӑ укҫапа халӑх ҫинђе шушкӑ илсе ҫинӗ—3 т. 40 к.

6. Роман Петринђен илнӗ укҫана халӑхпа сӑмакун ӗҫсе пӗтернӗ—5 т.

7. Тимӗр Матвинђен илнӗ укҫана халӑхпа шушкӑ илсе ҫисе йанӑ—9 т.

8. Санокпа Микихвер Иванӗ панӑ укҫана шушкӑ илсе ҫинӗ—5 т. 10 п.

9. Раман Антрейђран илнӗ укҫана шушкӑ ҫисе пӗтернӗ—6 т. 30 т.

10. 13 ҫынран, илнӗ укҫана шушкӑ ҫисе пӗтернӗ—19 т. 50 п.

Патирекйал совеђӗ претҫетаттӗлӗсем:
Кивви—Ҫеркей Ҫтаппанђ.
Хађхи—Ласук Унтри.

Сатађ (Сут вађђи): Кашни претҫетаттӗл миҫешер пӑт шушкӑ ҫисе йанӑ?

МУСКА.

Капкӑнран: Сушкӑ ҫиме йуратакан йалсоветне сушшилккӑ (аслӑк) ҫине суштит тума ҫакса хумалла.

Пуҫ ҫавӑракан

— Епӗ Упи вулӑсне Хветӗр патне пуҫ ҫавӑрттарма карӑм. Утатти пуҫне ҫавӑрттартӑм.

— Ҫавӑрса пађӗ и?

— Пађӗ.

— Ђипер хӗре пӑсса пӑрахрӑн ҫав. Хађ кам илӗ ӗнтӗ ӑна кађђа. Ђипер пуҫлисене те кађђа илекенсем сахал та, ҫаврӑнђӑк пуҫлине никам та илес ҫук. Сана куншӑн ҫынна ђӑлах пуҫлӑ тунӑшӑн тӗрмене хупмалла.

Вулакансен страници

Пуйан хуҫа.

Иалтан килнӗ карђӑк Ђӑваш Аслӑ суђӗн ҫуртне пӑхса пынӑ ҫӗртех такӑнса ӳкнӗ.

Иртсе кайакан: Вӑй пӗтри мӗн, кинемей? Ватӑлтӑн пуђ.

Карђӑк: Ватӑран мар, пысӑк ҫуртран тӗлӗнсе утнӑ ҫӗртенех такӑнса ӳкрӗм.

Иртсе кайакан: Ма пит тӗлӗннӗ унтан?

Карђӑк: Ара, тӗлӗнмесӗр, Пит пуйан пулӗҫке кӑна тӑвакан хуҫа. Мӗн йатлӑ хуҫа тунӑши кӑна?

Иертсе кайакан: Совет йатлӑ хуҫа.

Карђӑк: Апла пулсан Екрем хуҫаран пуйантарах хуҫасем те пур иккӗн пирӗн ђӑваш хушшинђе.

Иртсе кайакан: Пур ҫав, Карђӑк йулташ. П.

Йумах.

— Мӗншӗн хађки хӗрарӑмсем ҫӳҫӗсене касма пуҫларӗҫ.

— Паллак ӗнтӗ: ӑслӑрах пуласшӑн...

Ӗлӗк калаҫђӗҫ: „хӗрарӑмӑн ҫӳҫӗ вӑрӑм, ӑсӗ кӗске“, тетђӗҫ, халӗ ӗнтӗ апла мар.

Кунӗ ҫынна салтака илмеҫҫӗ.

(Годен. тенине тӑнланайман).

Мушик—йулташӑм, есӗ комиҫҫине кайаҫђен хытӑ кӑшкӑрса, йурласа ҫӳреттӗнђӗҫке. Мӗнле кайаймарӑн-ха?

1904 мӗш ҫулта ҫуралнӑ ађа:—Мана хотӑн (кутӑн) темерӗҫ. Халӗ салтака кунђисене илмеҫҫӗ, кутӑннисене анђах илеҫҫӗ. АЛӐ.

Мишавайа тухакан.

— Миша, есӗ ҫитӗнсен мӗне тухан?

— Езӗ-и? Мишавайа тухатӑп.

— Мӗншӗн урӑх ҫӗре мар тата?

— Мӗншӗн ҫтесен, мишавайа ҫӗр виҫнӗ ђухне пуйансем ҫӑмарта нумай ҫитереҫҫӗ. УЛАП САҤУКӖ.

Аманнӑ тухтӑр.

— Пирӗн пуђнитса вӑрҫӑра аманнӑ тухтӑра йанӑ пулас.

— Ма тата?

— Ҫирӗм утӑмра пурнакан ђирлӗ ҫын патне те лашасӑр пымасӑ.

УРХАМАХ.

Ӗҫ нумай.

— Пирӗн ҫекреттар тата икӗ ӗҫ туса пырать.

— Мӗнле ӗҫсене?

— Вӑл пирӗн турӑ та, патша та.

Ђӗрӗ хаҫат.

— Ех, епӗ ҫав ђӗрӗ хаҫат тенине пӗртте йуратмастӑп.

— Ма апла?

— Унпа нимӗн те ђӑркамалли ҫук.

Тӗне хирӗҫ пыракан.

— Намӑс мари сана, Йӑван, ђиркӳве ҫӳреме.

— Тупата ҫуремен.

— Суйатӑн. Кӗрсессӗнех сана сыхтӑм клирӑс патӗнђе тӑнине куртӑм. Намӑс, намӑс!... („Комар“).

Ыйхӑ ђирӗ.

— Илтни ес? Мускавра ыйхӑ ђирӗ тухнӑ тет.

— Ҫавӑнпа пулӗ-иҫ пирӗн шефсем ҫинђен нимӗн сасӑ те ҫук.



Капкорсене.

Куркана. Есӗ ҫыратӑн:

„Ишекре ернере йӗрре, шӑматкунсем, пасар пулсан иртет, тетӗн. Унта ҫынсем ӗҫе ӗсӗрӗлсе, вӑрҫса петеҫҫӗ, тетӗн. Киле таврӑнсан та аҫипӑҫисене, арӑмӗсене хӗнесе петереҫҫӗ тетӗн. Вӗсем хушшинҫе советра ӗҫлекенсем те, комсомолӗссем та пулаҫҫӗ, тетӗн. Милитси мӗн тӑвать унта? Иалсовеҫӗ мӗн тӑвать? Ие пурте сутти ӑшне кӗрсе ӳкнӗ-и? хаҫхи вӑхӑтра хуликансемпе пит вирлӗн кӗрешнине пелмеҫҫӗ-и мӗн? Есӗ кам апла хӑтланине, советра ӗҫлекенсемпе комсомолӗссем ӗҫсе вӑрҫни ҫинҫен пурин ҫинҫен йаҫӗсене кӑтартса ҫырса тӑр. „Капкӑн“ вӗсене пит ҫирӗп хӗстерсе тӑрӗ.

И. (Ҫӗнйал, Нурӑс в.). Улшуҫ Иакку ӗссӗрпе йут арӑмсем хыҫҫӑн ҫупса, «тватсать копейк парап» тесе кӑшкӑрни ҫинҫен хӑй арӑмне каласа пар.

Петука. Вӑрмар стансинҫи Устинӑв савӑтӗнҫе тӑвакан сӑмакун мӗн хак тӑнине ҫапма Уҫтинӑвран укҫа илетпӗр.

С. Штанашри (Аттай в.) „Трактӑр йатлӑ копператтивӑн ҫленӗсем ҫпиҫкӑлла тавлашса выҫама маҫтӑр пулсан, копператтив ӗҫне йерсех ҫитеймен пуҫха вӗсем.

Такама Щӑмат вулӑсӗнҫе 1924-мӗш ҫултанпах ҫӗрйӗркелес ӗҫ пырать пулсан та пӗтесси пӗрре те палӑ мар, тетӗн. Пӗр ҫулта пӗр мишавай виҫсе тухнӑ ҫӗрсене, тепӗр ҫулне тепӗр мишавай каллех виҫсе тухать тетӗн. Вулӗҫтӑвком та ҫӗр виҫнӗ ҫӗрте ӗҫлекен хресҫенсене ӗҫ укҫи памасӑр хуплантарать тетӗн, пӗр тенкӗшер 7—8 хут пыртарать тетӗн.

Апла ӗҫлесен сирӗн вулӑсри ҫӗрйӗркелӳ пахҫан та пӗтес ҫук мӗншӗн тесен кашни ҫулах ҫӗнӗ, мишавай пырса, кашни ҫулах ҫав вырӑнсенех виҫетерӗҫ. Тирпейлӗх решимӗ ҫапла ӗнтӗ вӑл, ӑна ӳпнелле ӳпӗнтерсе пӑрахсан.

Тӳрлӗтни.

„Капкӑн“ 16-мӗш нумӗрӗнҫи 5-мӗш страиитсӑри ӳкерҫӗк айне „инструктӑрсем“ тесе ҫырса хунӑ. Инструктӑрсем пулман унта, пухалтӗрсем пулнӑ. Ҫавӑнпа инструктӑрсене „Капкӑнран“ кӑларса, вӗсен вырӑнне, пухалтӗрсене кӗртсе хуратпӑр, Рас тва-три! Шӑрт-шарт! Ленкрӗҫ хаҫхискерсем!..

Ответ. редактор А. Золотов.

„Капкӑна“ йуратакансем!

„КАПКӐН“ шурнала САРМА тӑрӑшӑр!

Ҫулталӑклӑх 200 потписҫӗк тупакансене

ПУРНЕ ТЕ ПӖР ПЛУК

ПАРАТПӐР.

ХАКӖ пӗр уйӑха 10 пус.

Чувашлит № 958. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.